РФ Пенси фондĕнчен пĕлтереççĕ

# Пĕрлехи соцналук пăрахăçланать

2009 çулхи утă уйăхĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «РФ Пенси фондне, РФ Социаллă страховани фондне, обязательнăй медицина страхованийĕн Федераллă фондне тата обязательнăй медицина страхованийĕн территори фончĕсене тӳлемелли страховани взносĕсем çинчен» Федераллă саккунпа пĕрлехи социаллă налук (ЕСН) пăрахăçланать.

2010 çултан пуçласа пĕрлехи социаллă налук вырăнне патшалăхăн бюджет тулашĕнчи фончĕсене каякан страховани взносĕсем пурнăçа кĕреççĕ: РФ Пенси фондне, обязательнăй медицина страхованийĕн фондне, социаллă страховани фондне. Страховани взносĕсен тариф виçисем 2010 çулта 2009 çул шайĕнчех юлаççĕ (ЕСН – 26 процент). Çав шутра Пенси фондне – ĕç укçин 20 процентĕ, социаллă страховани фондне – 2,9 процент, обязательнăй медицина страхованийĕн фондне – 1,1 процент, обязательнăй медицина страхованийĕн территори фончĕсене – 2 процент.

2011 çултан страховани взносĕсем 34 процент таран ӳсĕç. Уйрăммăн илсен Пенси фондне тӳлемелли виçе 26 процент пулать. Вĕсенчен 20 процентĕ Страхлакан пенси пайне финанслама каять, 6 процентĕ – пухăнакан пай валли (1967 çултан аслисен 26 процентĕ те страховани пайне кайĕ). Социаллă страховани фончĕ унчченхи виçерех юлать (2,9 процент), обязательнăй медицина страхованийĕн федераллă фончĕ 2,1 процент, обязательнăй медицина страхованийĕн территори фончĕсене 3 процент пулать.

Ĕç параканăн взноссем тӳлемелли ĕç укçин виçине те палăртнă: страхланакан ĕç укçи çулталăкне 415 пин тенкĕ пулмалла. Унран пысăкрах виçерен взноссем тӳлемеççĕ. Ĕç укçин виçи пысăкраххисене хăйсем тĕллĕн хушма пенси капиталĕ йĕркелемелли условисем туса пană.

2010 çултан пуçласа ĕç паракансем страховани взносĕсене вăхăтра, туллин тата тĕрĕс тӳленине РФ пенси тата социаллă страховани фончĕсем тĕрĕслесе тăрĕç.

Пенси фончĕ Раççей çыннисен пенси прависене çирĕп ыйтса пырĕ. Страховани взносĕсене тӳлеменнисене административлă майпа ответ тыттарасси те иккĕмĕш вырăнта пулмĕ. Тӳлесе çитереймен виçесене банк счечĕсем çинчен илесси, штрафсем хурасси, пени тӳлеттересси, уголовнăй ĕçсем пуçарма йĕрке пăсни пирки информацисене право сыхлавĕн органĕсене парасси вĕсен тивĕçĕнче пулĕ.

Ĕç паракансем 2010 çулта Пенси фондне хăйсен ĕçченĕсем пирки çур çулта пĕрре индивидуаллă сведенисем тăратĕç. 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен – кашни кварталта ун хыççăнхи иккĕмĕш уйăхăн 1-мĕшĕччен. Вăхăтра тӳленĕ страховани взносĕсем пенси шайлашăвĕсене тĕрĕс тытса пыма пулăшĕç.

**Е. АЛЕКСАНДРОВА,**
**районти Пенси фончĕн Управленийĕн пуçлăхĕ.**

Хирĕçлетпĕр

# Тенкĕне йӳнетмелле мар

**«Единая Россия» партин ĕç тăвакан Тĕп комитечĕн пресс-служби** пĕлтернĕ тăрăх, партин Тĕп Канашĕн Президиумĕн секретарĕ, РФ Патшалăх Думин вице-спикерĕ Вячеслав Володин Раççейри регион банкĕсен ассоциацийĕн пуçлăхĕ, «Справедливая Россия» партин ертӳçисенчен пĕри Анатолий Аксаков Раççей тенкине 40 процент таран йӳнетме сĕннине тишкерсе çапла каланă: «Единая Россия» пĕр сăмахсăр Анатолий Аксаков тĕллевне хирĕç пулать. Пирĕн шухăшпа, çакă – халăха хирĕçле сĕнӳ.

«Справедливая Россия» партин ертӳçисенчен пĕри, регион банкĕсен ассоциацийĕн пуçлăхĕ тенкĕне 40 процент йӳнетес тесе ĕç çыннисен укçи-тенкине тапăнать. Олигархсемпе пĕчĕк бизнес интересĕсене хӳтĕлесе Аксаков тенкĕ пĕлтерĕшне пĕтересшĕн. Çак сĕнӳ чи малтан вăтам класа тата чухăн çынсене пырса тивессине усăмлăн каламаллаччĕ унăн.

Кун çинчен «Справедливая Россия» элчи Анатолий Аксаков пĕрре кăна мар калать. Сăмахран, унччен вăл потребитель кредитне (холодильник, телевизор туянма илнĕ укçатенкĕне) кризиса пула вăхăтра таврайманнисене уголовнăй йĕркепе явап тыттарма, тепĕр майлă каласан, тĕрмене лартма сĕнетчĕ.

Аксаков сĕнĕвне эпир пурте сивлетпĕр. «Единая Россия» кунашкул пуçарусене пăçлантарма пĕтĕмпех тăвĕ. Патшалăх Думи канăва вĕçлесенех эпир регион банкĕсен ассоциацийĕн пуçлăхне Анатолий Аксакова Банксен наци канашĕнчен чĕнсе илме сĕнӳ тăрататпăр».

**Тунти кун А. Аксаков депутатăн Шупашкарти общество йышăнăвĕн çурчĕ умĕнче иртнĕ пикета хутшăннă вун-вун çын депутат «девальвацине» сивлерĕ.**

Пирĕн календарь

# Паттăр ентеш çуралнăранпа – 85 çул



Совет Союзĕн Геройĕ Илья Григорьевич Мешаков çуралнăранпа августăн 10-мĕшĕнче 85 çул çитрĕ. Пирĕн мухтавлă ентеш Оринин ял тăрăхĕнчи Пăсăрман ялĕнче çуралса ӳснĕ. Тăван ялĕнчи пуçламăш шкул хыççăн Орининти вăтам шкула çӳреме тытăннă. Шкул хыççăнхи пĕрремĕш ĕç утăмĕсем унăн «Аврора» колхозра пулнă.

1941 çулта шкул пĕтернĕскер тепĕр çулталăкранах Аслă Отечественнăй вăрçа каять. Тĕрлĕ фронтсенче çапăçать вăл: хĕвеланăç, кăнтăр-хĕвеланăç, «степной», 1 тата 2 Украина фрончĕсенче.

1942 çулхи август уйăхĕнче автоматчик пулса çапăçусене кĕрет. Каярах пултаруллă чăваш каччи взвод командирĕн пулăшаканĕ, старшина пулать. 1944 çулхи мартăн 26-мĕшĕнче Илья Мешаков плацдарма сарас тĕлĕшпе иртнĕ çапăçура 6 нимĕçе вĕлерет, тепĕр иккĕшне тыткăна илме пултарать. Хастарлăхпа тата пуçарулăхпа палăрса тăракан йĕкĕт, маларах тухса хăй автомачĕпе пĕр чарăнми «çулăм» кăларса, çапăçăва хутшăннă ушкăнпа нимĕçсен траншейĕйисене çĕнсе илеççĕ.

1944 çулхи июнĕн 3-мĕшĕнче И. Мешакова Совет Союзĕн Геройĕ ят параççĕ.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче Илья Григорьевич комсомол тата парти организацийĕсенче тимленĕ. Коммунистсен партийĕн Муркаш райкомĕн секретарĕнче те вăй хунă. Муркашри вăтам шкулта учитель, Ярапайкассинчи тĕп шкулта вара директор пулса сахал мар тăрăшнă. Тĕрлĕ орден-медальсене тивĕçнĕ вăл.

1971 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче паллă ентеш вăхăтсăр çĕре кĕнĕ.

Илья Григорьевич Мешаков çуралнăранпа 85 çул çитнине халалласа Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека выставка та хатĕрленĕ. Унти тĕрлĕ кĕнекесемпе хаçат-журналсем Геройăн кун-çулне çутатса параççĕ. Вăрçăри паттăрла ĕçĕ çинчен вара выставкăна тăратнă полк командирĕ Королев майор ыйтса çырнинчен те пĕлме пулать.

**Хамăр инф.**

Çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхшăн

# Ачасене куç пек упрасчĕ

Çултан-çул автотранспорт йышĕ ӳссех пырать. Çавна пула çул çинче инкек-синкек курнă, сарăмсăр вилнĕ çынсен шучĕ те ӳсет. Вĕсем хушшинче ачасем пулни пушшех те пăшăрхантарать. Çавăнпа та çул çинчи хăрушсăрлăх яланах актуаллă ыйту шутланса тăрать.

Муркаш салинче те транспорт сахал мар.



Тепĕр чухне вĕсем çав тери хăвăрт çӳреççĕ. Пирĕн «Солнышко» ача сачĕ асфальт çултан инçех мар вырнаçнă. Кашни кун ачасен ирпе-каçпа çав çул урлă каçмалла. Çул урлă каçса çӳреме вара çул-йĕр правилисене пĕлмелле. Нумаях пулмасть ача сачĕ умĕнче çул урлă каçма «зебра» ӳкерсе пачĕç. Ку питĕ кирлĕ япала.

Ача садĕнче вара эпир ачасене мĕн пĕчĕкрен çул çинче хăйсене мĕнле тытмаллине, çул-йĕр правилисене пăхăнмаллине, çакăнпа пĕрлех хăйсен пурнăçĕпе сывлăхне упрамаллине вĕрентетпĕр. Çак ĕçе туса пыма пире тĕрлĕ методика пособийĕсем, дидактика вăййисем пулăшаççĕ. Тĕрлĕ авторсен ятарлă программисемпе те усă куратпăр: «Шкул çулне çитмен ачасен хăрушсăрлăх никĕсĕсем», «Три сигнала светофора».

Кăçалхи çул эпĕ 5-6 çулхи ачасемпе ĕçлетĕп. Çуллахи вăхăтра вĕренӳ занятийĕсем сахалраххипе усă курса, ачасене ытларах çул-йĕр правилисене вĕрентме шутларăм. Çитес çул вĕсен шкула каймалла-çке-ха. Шкулĕ вара çывăххах мар. Çул-йĕр правилисене пĕлмесен инкек курасси те инçе мар.

Чи малтанах эпир ачасемпе тĕрлĕ мелсемпе усă курса транспорт çинчен пухнă пĕлĕве çирĕплетрĕмĕр. Хыççăн вара çул-йĕр паллисемпе паллашрăмăр. Ушкăнра ятарлă кĕтес усрăмăр, ăна «Светофорик» ят патăмăр. Нумай пулмасть пирĕн ачасемпе районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда инспекторĕ А. Щербаков тĕл пулу ирттерчĕ. Питĕ тимлĕ итлерĕç ăна ачасем. Тĕрлĕрен ыйтусем те пачĕç. Тата пирĕн ача садне Шупашкарти çамрăксен театрĕн артисчĕсем «Приключения Светофора» ятлă спектакльпе килсе кайрĕç. Ку та пирĕн ачасемшĕн питĕ усăллă пулчĕ.

Çул çинчи тимлĕх ашшĕ-амăшĕсенчен нумай килет. Çавăнпа та вĕсемпе ĕçлесси – тĕп вырăнта. Ашшĕ-амăшĕсем валли курăмлăх материалĕсем пухнă папкăсем хатĕрлерĕмĕр, вĕсемпе конкурссем те ирттертĕмĕр.

Ачасене инкек-синкекрен сыхласси – аслисен тивĕçĕ. Çул-йĕр правилисене ачасене аса илтерсех тăрар, хамăрăн та вĕсене пăсас марччĕ. Ан манăр – ачасем аслисенчен тĕслĕх илеççĕ.

**Т. НИКОЛАЕВА,**
**Муркашри «Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ.**

**Ред.**: Çакăн евĕрлĕ çыру «Путене» ача садĕнчен те килчĕ. О. Троицкая воспитатель вĕсем патĕнче те А. Щербаков тĕл пулу ирттерни çинчен пĕлтерет. Ачасем çул çинче тимлĕ пулчăр тесе кунта Р. Андреева воспитатель нумай тăрăшать.

**Сăн ӳкерчĕксенче: «Солнышко» ачисем занятире питĕ тимлĕ; «Путенере» хăнара – ГИБДД инспекторĕ.**



В налоговой инспекции

# О финансовом контроле

**Вопрос:**

***Распространяются ли требования Федерального закона от 26.12.2008 №294-ФЗ «О защите прав юридических лиц и индивидуальных предпринимателей при осуществлении государственного контроля (надзора) и муниципального контроля» на мероприятия (проверки), проводимые налоговыми органами по контролю за применением контрольно-кассовой техники?***

**Ответ:**

Положения Федерального закона от 26.12.2008 №294-ФЗ «О защите прав юридических лиц и индивидуальных предпринимателей при осуществлении государственного контроля (надзора) и муниципального контроля» (далее – Закон №294-ФЗ), устанавливающие порядок организации и проведения проверок субъектов предпринимательства, не применяются при осуществлении государственными органами мероприятий по финансовому контролю.

Понятие «финансовый контроль» частично раскрывается в Указе Президента Российской Федерации от 25.07.1996 №1095 «О мерах по обеспечению государственного финансового контроля в Российской Федерации», согласно которому государственный финансовый контроль включает в себя контроль за исполнением федерального бюджета и бюджетов федеральных внебюджетных фондов, организацией денежного обращения, использованием кредитных ресурсов, состоянием государственного внутреннего и внешнего долга, государственных резервов, предоставлением финансовых и налоговых льгот и преимуществ.

В соответствии со ст. 2 Федерального закона от 22.05.2003 №54-ФЗ «О применении контрольно-кассовой техники при осуществлении наличных денежных расчетов и (или) с использованием платежных карт» контрольно-кассовая техника применяется в обязательном порядке всеми организациями и индивидуальными предпринимателями при осуществлении ими наличных денежных расчетов и (или) расчетов с использованием платежных карт в случаях продажи товаров, выполнения работ или оказания услуг.

Согласно ст. 7 Закона Российской Федерации от 21.03.1991 №943-1 «О налоговых органах Российской Федерации» (далее – Закон №943-1) полномочия по контролю за соблюдением требований к контрольно-кассовой технике, порядком и условиям ее регистрации и применения, за полнотой учета выручки в организациях и у индивидуальных предпринимателей возложены на налоговые органы. При этом последним предоставлено право получать необходимые объяснения, справки и сведения по вопросам, возникающим при проведении проверок, проводить проверки выдачи кассовых чеков, налагать штрафы на организации, а также на индивидуальных предпринимателей за нарушение требований законодательства о применении контрольно-кассовой техники.

Определением от 09.06.2005 №222-О и постановлением от 12.05.1998 Конституционный Суд Российской Федерации указал, что нормы Закона 943-1 имеют многофункциональное значение и направлены на обеспечение интересов граждан в области торговли и оказания услуг, защиту прав потребителей, а также на охрану установленного порядка торговли и оказания услуг, фискальных интересов государства, финансовой (в том числе налоговой) дисциплины. Обязательное применение контрольно-кассовой техники связывается прежде всего с отражением фискальных данных на контрольной ленте и в фискальной памяти комплекса программно-аппаратных средств в составе контрольно-кассовой техники, обеспечивающих хранение итоговой информации, необходимой для полного учета наличных денежных расчетов в целях правильного исчисления налогов.

С учетом изложенного, мероприятия (проверки), проводимые налоговыми органами по контролю за применением контрольно-кассовой техники относятся к финансовому контролю, на который не распространяются положения Закона №294-ФЗ.

**Межрайонная ИФНС России № 6 по Чувашской Республике.**